**Никифорова Л.В., учитель чувашского языка**

# АННЕ – ПИРĔН ПУРĂНĂÇ, ПИРĔН САВĂНĂÇ, ПИРĔН ТЕЛЕЙ

(Г.Н.Волковăн «Анне яшки» калавĕ тăрăх йĕркеленĕ урок)

**Урок тĕсĕ:** хайлава тишкермелли хутăш калаçу урокĕ.

**Сапăрлав тĕллевĕ:** ачасене сăпайлă пулма, амăшĕсене хисеплеме, юратма вĕнтесси.

**Пĕлӳ тĕллевĕ:** «Анне яшки» хайлавăн тĕп шухăшне палăртасси, пĕтĕмлетӳ тăвасси.

**Аталантару тĕллевĕ:** ачасене чун илемне туйма вĕрентесси, шухăшлава çивĕчлетме пулăшасси.

**Урок мелĕсемпе меслечĕсем:** учитель сăмахĕ, учитель вулавĕ, ыйту-хурав, ачасен вулавĕ.

**Пуплеве аталантарасси:** хайлава илемлĕ вулама, содержанине каласа пама вĕрентесси, темăна уçса паракан йĕркесене, илемлĕх мелĕсене, каларăшсене тупма вĕрентесси.

**Словарь ĕçĕ:** тантăш, ют çĕр-шыв, тивĕçлĕ, пĕр самантлăх, салма яшки, тăм чӳлмек, авалхи.

**Кирлĕ хатĕрсем:** проектор, PowerPoint, программăра хатĕрленĕ слайдссем, интерактивлă доска, карточкăсем, Г.Волков кĕнекисем.

**Урок эпиграфĕ:** «Мĕнле телей… анне пурри…» (Г.Н.Волков).

## Урок юхăмĕ

**I. Класа йĕркелени.**

Сывлăх сунни, хăнасене кĕтсе илни, вĕсемпе паллаштарни.

**II. Çĕнĕ темăпа паллаштарни.**

**1.** Урок темипе, тĕллевĕсемпе, йĕркипе паллаштарни.

2. Урок эпиграфĕпе ĕçлени: эпиграфа вулани, тĕп шухăшне палăртни.

– Кашни çыннăн юратнă амăшĕ пур. Анне пире пурнăç парать. Пĕчĕкрен ачашласа, юратса, лăпкаса çитĕнтерет. Ачисене вĕрентсе пырса тĕрĕс воспитани парассишĕн нумай тăрăшать, пурнăç çулĕ çине кăларать. Çитĕнсе çитнĕ ачисем тĕрлĕ вырăнта пурăнаççĕ, тĕрлĕ ĕçре ырми-канми вăй хураççĕ. Хамăр çĕр-шыври хуласенче çеç маар, ют çĕр-шывсенче те, Атăл хĕрринче, чăваш халăхĕ пурри çинчен пĕлтерсех тăраççĕ вĕсем. Чăваш халăхне чапа кăларнă космонавт та, адмирал та, спортсмен та, юрăçă та, академик та, поэт та пур. Вĕсем хăйсен ĕçĕ-хĕлĕпе амăшĕсене чăннипех савăнтараççĕ.

3. Слайдсемпе ĕçлени.

а) 1-мӗш слайдпа ӗҫлени.

– Экран ҫинче Муркаш районӗнчи Исетерккӗ ялӗнчи Татьяна Николаевна Алексеевăн палăкӗ.

– Ку камăн палăкӗ?

– Вăл ăҫта тăать?

– Унăн куҫӗ мӗнле?

– Татьяна Николаевна ăҫталла пăхать?

1-мӗш ача: Татьяна Николаевна савнă мăшăрӗпе сакăр ывăл пăхса ҫитӗнтернӗ. Ывăлӗсем маттур та пултаруллă пулнă. Ашшӗпе амăшӗ ачисем ҫине пăхса савăннă. Иккӗмӗш тӗнче вăрҫи пуҫлансан Алексеевсен ывăлӗсем Тăван ҫӗр-шыва хӳтӗлеме тухса каяҫҫӗ. Хаяр вăрҫă хирӗнче каччăсен пурнăҫӗсем вăхăтсăр татăлаҫҫӗ – паттăрла кӗрешсе пӗрин хыҫҫă тепри куҫӗсене хупаҫҫӗ.

ă) Ачасем сăвă йӗркисене вулани.

2-мӗш ача:

Киле ҫитрӗ хăрушă хыпар –
Ҫухалнă ывăлу вăрҫăра…
Мӗнле чăтăн-ши ку инкеке,
Мӗнле чăтăн-ши ҫухатăваа?

3-мӗш ача:

Эсир ӳстернӗ ывăлсем
Юлчӗҫ вăрҫă хирӗнче.
Мӗнле чăтрӗ-ши чӗрӳ –
Салтак амăшӗн чӗри.

б) Иккӗмӗш слайдпа ӗҫлени.

4-мӗш ача: Ку ӳкерчӗке 1964 ҫлта чăвашсен паллă художникӗ Николай Карачарсков ӳкернӗ. Хайлавӗ «Анне сăнӗ» ятлă. Ӳкерчӗкре асанне, анне, кинемей сăнарӗсем. Ывăннă хӗрарăм канма ларнă. Алли унăн нумай ӗҫленӗ, ӗҫпе хытнă. Кинемей шухăша кайнă. Паллах, вăл аякра пурăнакан ывăлӗ-хӗрӗ ҫинчен шухăшлать, тунсăхлать.

в) Виҫҫӗмӗш слайдпа ӗҫлени.

5-мӗш ача: Атӑл хӗрри. Управҫӑ Анне монуменчӗ. Ӑна В.В.Нагорнов скульптор хатӗрленӗ. Палӑка мӗн пур аннене халалласа лартнӑ. Ҫак палӑка курсан кашниех хӑйӗн амӑшне аса илет.

г) Ачасем хӑйсен амӑшӗсем ҫинчен килте ҫырнӑ кӗске сочиненисене вулани.

4. Учитель Г.Н.Волков пурнӑҫӗпе, пултарулӑхӗпе паллаштарни.

5. «Анне яшки» калавпа ӗҫлени.

а) Словарь ӗҫӗ: тантӑш, ют ҫӗр-шыв, тивӗҫлӗ, пӗр самантлӑ, салма яшки, тӑм чӳлмек, авалхи.

Учитель сӑмахсене вулать. Ачасем учительпе пӗрле куҫараҫҫӗ; пӗрерӗн-пӗрерӗн вулаҫҫӗ; предложенисем тӑваҫҫӗ. Ҫӗнӗ сӑмахсене словаре ҫыраҫҫӗ.

ӑ) Учитель текста вулани.

б) Ачасем ӑшра тата сасӑпа илемлӗ вулани.

в) Ыйту-хурав.

– Тантӑшсем миҫе ҫултан тӗл пулнӑ?

– 30 ҫул хушшинче вӗсем мӗн-мӗн тунӑ?

– Пӗр юлташӗ мӗншӗн калаҫӑва хутшӑнман?

– Вӑл мӗншӗн савӑнӑҫлӑ?

– Тантӑшсем мӗншӗн шӑпланнӑ?

– Пурнӑҫра чи хакли мӗн?

– Калавӑн тӗп шухӑшне палӑртӑр.

– Эсир калав авторӗн шухӑшӗпе килӗшетӗр-и?

– «Анне яшки» калав пире мӗнле пулма вӗрентет?

г) Калав содержанине каласа пани.

д) Текстри илемлӗх мелӗсене тупни, каларӑшсене ҫырса илни.

**III. Кану саманчӗ.**

**1.** «Тинӗс хӗрринче» вӑйӑ.

– Ачасем, ура ҫине тӑрӑр. Эпир тинӗс хӗрринче. Куҫӑрсене хупӑр. Тинӗсӗн уҫӑ, таса сывлӑшӗпе сывлатпӑр. Сывлатпӑр, тарӑннӑн сывлатпӑр.

Куҫсене уҫатпӑр, инҫетелле тинкеретпӗр…

– Ачасем, эсир инҫетре мӗн куратӑр? Черетпе каласа тухӑр.

**2.** «Кам малтан йӗркелет?» вӑйӑ.

Кашни парта ҫинче конвертсем. Вӗсенче сӑмахсем. Ачасен сӑмахсене тӗрӗс вырнаҫтарса ваттисен сӑмахӗсем йӗркелемелле.

1) Анне тӗнчере пӗрре.
2) Аннерен хакли никам та ҫук.
3) Аннӳ пур чух тӑлӑх пулмӑн.
4) Виҫҫӗри хӗр амӑшне пулӑштӑр, виҫҫӗри ывӑл ашшӗне хӳтӗлетӗр.
5) Амӑшӗ ачисемшӗн – чи лайӑххи.
6) Анне юратӑвӗ нихӑҫан та сӳнмест, сивӗнмест.
7) Анне яшки – чи тутли.
8) Аннен ӗҫӗ нумай, вӑхӑчӗ сахал.
9) Анне кулли хӗвел ҫутипе пӗрех.

Ачасем ваттисен сӑмахӗсене вулаҫҫӗ, куҫараҫҫӗ, пӗлтерӗшне ӑнлантараҫҫӗ.

**IV. Урока пӗтӗмлетни.**

**1.** Учитель сӑмахӗ.

– Ачасем, пурнӑҫра япала та мар, пурлӑх та мар – анне чи хакли. Пирӗн аннесене хисеплемелле, юратмалла. Яланах вӗсене пулӑшма тӑрӑшмалла. Эпир ырӑ, усӑллӑ ӗҫсем тусан вӗсем чунтан савӑнаҫҫӗ, пирӗнпе мухтанаҫҫӗ.

Амӑшӗ ачине яланах ыррине сунать. Вӗренӳре, ӗҫре ҫитӗнӳсем тума вӑй, пил парса пырать. Нихӑҫан та кӳрентерес марччӗ аннене, усал сӑмах каласа киревсӗр ӗҫсем туса ыраттарас марччӗ аннеҫӗм чӗрине.

Анне – пирӗн пурӑнӑҫ, пирӗн савӑнӑҫ, пирӗн вӑй.

**2.** Анне ҫинчен юрӑ юрлани.

Сӑви В.Давыдов-Анатрин, кӗвви А.Печниковӑн

Эх, аннеҫӗм, пӗртен-пӗр анне,

Санран хаклӑ ҫын ҫук тӗнчере.

Эс ҫӗклетӗн чуна-чӗрене,

Ырӑ пурнӑҫ пиллетӗн пире.

Эх, аннеҫӗм, пӗртен-пӗр анне,

Санран савнӑ ҫын ҫук тӗнчере.

Эс упратӑн ҫемье илемне,

Пӗр самант та манмастӑн пире.

Эх, аннеҫӗм, пӗртен-пӗр анне,

Çук санран сăпай çын тĕнчере.

Çак юрра йышăнсамччĕ пиртен,

Эс тухмастăн чунтан-чĕререн.

Чăн-чăн пысăк телей эс пурри,

Саншăн пултăр чĕремĕр юрри.

Çĕнĕ юрă янрать сан çинчен,

Вăл сана парне пултăр пирĕнтен!

**3.** Ачасен ĕçне хаклани.

**V.** Киле ĕç пани: Г.Н.Волков çырнă «Анне яшки» калав содержанине каласа пама вĕренмелле.

Манăн урок теми «Анне – пирĕн пурăнăç, пирĕн савăнăç, пирĕн телей» ятлă. Çак темăна ахальтен суйласа илмен. Кăçал республика пуçлăхĕн М.Игнатьевăн Указĕпе килĕшӳллĕн атте-анне çулталăкĕ тесе йышăннă. Кашни çын пурнăçĕнче çемье, уйрăмах амăшĕ пысăк вырăн йышăнать. Çакна тĕпе хурса йĕркеленĕ те урок юхăмне. Урок эпиграфĕ валли Г.Н.Волков сăмахĕсене илнĕ. «Мĕнле телей … анне пурри…», тенĕ академик. Вĕренекенсем урокра Г.Н.Волковăн «Анне яшки» калавне тĕпе хурса ĕçлеççĕ. Урокăн тĕллевĕ тĕрлĕ енлĕ. Чăн малтан ачасен пуплевне аталантарасси, вĕсене сăпайлă пулма, амăшĕсене хисеплеме, юратма, чун илемне туйма вĕрентесси пулса тăрать. Çавăн пекех чăваш халăхĕ паллă çынсемпе пуян пулнине çирĕплетни те кирлĕ тесе шутлатăп.

Ман шутпа, урок ачасен тавракурăмне аталантарма, пурнăçра япала та мар, пурлăх та мар, анне чи хакли пулнине ăнланма пулăшĕ.